25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ЯНВАРЬ 9 ШАМАТКУН 7(6244) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Производство командирĕсен пуçарулăхĕпе тавçарулăхĕ

Социализмлă промышленность çуралса аталаннипе пĕрлех унăн ертсе пыракан кадрĕсем—производство командирĕсем вĕренсе çитĕнчĕç. Сталинла пилĕкçуллăхсенче парти пăхса ÿстернĕ инженерсемпе техниксем промышленноçра пысăк вăй пулса тăраççĕ. Пирĕн предприятисем кунран кун ытларах продукци туса кăларасси, фронт заказĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси çав вăйран чылай килет. Ахальтен мар ĕнтĕ Сталин юлташ ертсе пыракан кадрсене: вĕсем ĕçĕн тĕп ăнăçлăхне татса параççĕ, тесе хаклать.

Инженерсемпе техниксен производствари вырăнĕ яланах пысăк пулнă, халĕ, вăрçă кунĕсенче, вăл татах та ÿсрĕ. Производство командирĕ—Хĕрлĕ Çарăн сывăх помощникĕ пулса тăчĕ.

Çапăçу хирĕнчи хăюллă командирпа тылри ĕçчен командир пĕр пархатарлă тĕллевшĕн—ылханлă тăшмана вĕлерсе пĕтерессишĕн, совет çĕрĕсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешеççĕ, ĕçлеççĕ. Фронтри хаяр кĕрешÿпе тылри хĕрÿ ĕç вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрălми çыхăнтарса тăрать; хурçă пек çирĕп дисциплина вĕсен палли пулса тăрать.

Анчах хальхи вăхăтра производство командирне дисциплинăллă пулни кăна çитмест, унăн тата, çапăçу хирĕнчи командир пекех, пуçаруллă та тавçăруллă пулмалла. Пуçарулăхпа тавçарулăха Сталин юлташ вырăс халăхĕн паха енĕ тесе хаклать.

Производствари çирĕп те ăста командир техника мĕн панине пĕтĕмпех илме, оборудованисемпе туллин усă курма тăрăшать, кашни рабочие пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттерет. Производствари тавçăруллă та пуçаруллă командир тĕл пулакан кăлтăксемпе çитменлĕхсене хăвăрт сирет, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли, продукци нумайрах туса кăлармалли майсене шыраса тупать. Çирĕп те ăста, тавçăруллă та пуçаруллă командир тунă çитĕнÿсене çирĕплетсех пырать, вĕсемпе лăпланса лармасть, пĕрмаях малалла шăвать.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура производствăна çавăн пек ертсе пыракан работниксем сахал мар палăрчĕç. Малта пыракан предприятисемпе вĕсен руководителĕсене çĕршыв лайăх пĕлет, совет правительстви вĕсене хăйĕн наградине парса чыслать. Фронт ыйтнă пек ĕçленĕшĕн Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕçлĕ пулнă промышленность работникĕсем хушшинче пирĕн республикăри инженерсемпе техниксем те пур. Н-ски заводри инженера Г. Малашин юлташа «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе, главнăй инженера И. Челноков юлташа «Знак почета» орденĕпе, Канаш леспромхозĕн директорне К. Федоров юлташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕпе наградăланă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тунă çитĕнÿсемшĕн республикăри уйрăмах палăрнă заводсен инженерла-техникла тата ертсе пыракан вуншар работникĕсем Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Тăшмана хаяррăн куркăманни, тăван çĕршыва чĕререн юратни пултаруллă командирсем ертсе пыракан рабочисен коллективĕсене пысăк çитĕнÿсем тума пулăшать. Н-ски заводри А. Кинзбургский юлташ ертсе пыракан цех мĕнле ĕçленинчен пĕтĕм завод плана тултарасси, çапла вара Хĕрлĕ Çара кирлĕ продукци туса парасси килет. Цехри рабочисемпе работницăсем тата вĕсен командирĕ А. Кинзбургский юлташ çакна лайăх ăнланаççĕ. Кинзбургский юлташпа унăн ĕçри помощникĕсем цеха лайăх ĕçлекен тăвассишĕн сахал мар тăрăшнă: производствăри ытлашши процессене пĕтернĕ, издели пулса тухас çула кĕскетнĕ, кашни рабочин ĕçне май пур таран расналантарса çитернĕ. Çавăнпа цехри рабочисемпе работницăсем хăйсен нормисене пурте пекех ирттерсе тултараççĕ, çавăнпа цех уйăхран уйăха плана срокчен тултарать, ытларах продукци туса кăларать. Пултаруллă начальник Кинзбургский юлташ ертсе пыракан цех заводăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне улттăмĕш уйăх ĕнтĕ алăран вĕçертмест.

Анчах предприяти директорĕсен, цех начальникĕсен, смена мастерĕсен çакна асра тытмалла: тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларма юрамасть, пĕрмаях малалла шăвас пулать, унсăрăп теприсем хăваласа çитсе иртсе кайма пултараççĕ. Çак чăнлăха эпир Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн уйрăм тĕслĕхĕсенчен лайăх куратпăр. Июль уйăхĕнчи социализмлă ăмăрту итогĕсем тăрăх Канашри вагонсем юсакан завод Çул-йĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ. Анчах завод руководителĕсем çак çитĕнÿпе лăпланса ларма пăхрĕç пулас, производство командирĕсем хăйсен участокĕсене çÿрĕккĕнрех ертсе пыма пуçларĕç. Çавна пула завод коллективĕ çав Хĕрлĕ ялава тепĕр уйăхранах алăран вĕçертрĕ. Халĕ унтанпа танмар хăвăртлăхсемпе, час-часах пулакан кăлтăксемпе ĕçлесе пырать. Кунти хăшпĕр цехсен начальникĕсем производствăна ку таранччен çĕнĕлĕхлĕ майсемпе ертсе пыраççĕ, ĕçри кăлтăксене вăхăтра сирмеççĕ, ырап тумалли ĕçсене паянах палăртса хумаççĕ. Производствăна малтанах хатĕрлесе хуманни, çавна пула ĕçлеме тытăнсан чĕртаварпа материалсем çитменни, паян туса кăларнă продукци цифрисемпе пуранни—заводри хатĕрлекен цехсен, механическипе тимĕрçĕ цехĕсен пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать.

Заводри производство командирĕсен, парти организацийĕсен задачи çак çитменлĕхсене пĕтересси, завода каллех çирĕп график тăрăх, ÿссе пыракан хăвăртлăхпа ĕçлемелле тăвасси пулать.

Предприятие ертсе пырасси вăрçă кунĕсенче чылай енчен йывăрланчĕ. Халĕ завод директорĕсемпе цех начальникĕсен вăрçăччен урăх çĕртен кÿрсе тăнă детальсемпе изделисенчен чылайăшне хăйсем патĕнчех тума тивет. Выранти майсемпе ресурссене шыраса тупни, вĕсемпе производствăра усă курни—çаксенче пулмалла та ĕнтĕ производство командирĕсен пултарулăхĕ, пуçарулăхĕпе тавçарулăхĕ.

Пирĕн промышленность иртнĕ çулхи плансене вĕçлесе çĕнĕ çулхи ĕçсене тытăнчĕ. 1943 çулта промышленность предприятийĕсем умĕнче çĕнĕ те пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Производство командирĕсен тивĕçĕ—çав задачăсене витĕр курса ĕç планĕсене тĕрĕс тăвасси. Плансене тунă чух производствăна пĕрмаях ÿстерсе пырасси çинчен ытларах шухăшлас пулать, ыранхи кун çинчен манма юрамасть. Мĕншĕн тесен хĕрсех пыракан вăрçă паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен нумайрах продукци ыйтать. Çакăнта ĕнтĕ пирĕн инженерсемпе техниксен чăн-чăнах та пултаруллă пулмалла, анлă пуçарулăхпа тавçарулăх кăтартмалла.

Промышленность халĕ хĕлĕн уйрăмрах та йывăртарах условийĕсенче ĕçлет. Хĕл—хуçалăх работникĕсемпе производство командирĕсем ĕçе мĕнле йĕркелеме пултарнине, ыранхине мĕн таран курса ĕçленине тĕрĕслет. Топливăна, электроэнергие, материалсене перекетлес тĕлĕшпе малтанах палăртса хунă мероприятисене халĕ пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе пымалла ĕнтĕ. Кăмакасемпе ăшă çÿремелли трубасем юсавлине, энергипе пĕтĕмпех кирлĕ çĕрте усă курнине, топливăна мĕнле расходланине халĕ татах та тепĕр хут тĕрĕслес пулать; топливăна, электроэнергие май пур таран перекетлес пулать. Перекетлĕхпе тăпăтерлĕхшĕн кĕрешнĕ çĕрте каллех производство командирĕсен большевикла çирĕплĕхĕпе тимлĕхĕ, тавçăрулăхĕпе пуçарулăхĕ палăрса тăмалла.

Çĕршывра хăватлă социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ хумĕ сарăлса пырать. Малта пыракан 172-мĕш номерлĕ завод коллективĕн чĕнĕвĕ çине ответлесе, пирĕн предприятисен коллективĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине производствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе паллă тума пулса обязательствăсем илеççĕ. Производство командирĕсен парти организацисемпе пĕрле социализмлă ăмăртăва усăмлăн ертсе пымалла, рабочисемпе работницăсен ĕçри çĕкленĕвĕпе плана кашни предприяти, кашни цех, участок тăрăх тултарас тĕллевпе усă курмалла, плана çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчен тытăнсах тултарса пымалла.

Çулталăкри планран ирттерсе 168.000 тенкĕлĕх продукци

Шупашкарти «Пекарь» артель иртнĕ çулхи ĕçсен планне 130,8 процент, вăл шутран куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 108,9 процент тултарчĕ, çулталăкри планран ирттерсе çĕршывпа фронта 168 пин тенкĕлĕх продукци пачĕ.

Артель хуçалăх çулăн юлашки уйăхĕнче—декабрьте начар мар ĕçлерĕ: уйăхри плана 228 процент тултарчĕ. Уйрăм цехсенчен çĕвĕ çĕлекен цех мала тухрĕ. Унăн декабрьти ĕç результачĕсем планпа палăртнинчен икĕ хут пысăкрах.

Çĕршыв ыйтнине тивĕçтерессишĕн тăрăшса, артельри рабочисемпе работницăсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пычĕç. Бригадирсем А. Харитонова, Н. Кузьмин, работницăсем В. Иванова, М. Романова, А. Осина юлташсем декабрьти ĕç нормине 200-шер процент тултарчĕç.

Мухинпа Вастеев юлташсем Атăл çинче пулă тытаççĕ. Вĕсем иртнĕ уйăхра пулă тытмалли задание хăйсен ытти юлташĕсемпе пĕрле 233 процент тултарчĕç.

А. МУРЫШКИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра, наступлени туса пырса, **Мартыновка, Николаевская, Романовская** ятлă район центрĕсене, **Мало-Хлоповский, Власов, Вишневка, Николаев, Александров, Ново-Петровский, Димков, Зазерский, Кухачев, Вихлянцев, Страхов, Шаминко, Топилин** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **Вальково** ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ.

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем **Степное, Советское** ятлă район центрĕсене тата **Соломенская, Сухая Впадина, Северный** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Январĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 120 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 15 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен склачĕпе горючи складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Çав штурмлакан группăсене пулăшса пырса, артиллеристсем противникăн 12 огневой точкине пусарса лартнă тата 9 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ. Сталинградран хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пăшалсемпе тата пулеметсемпе хирĕ-хирĕç персе тăнă тата разведчиксем активлăн ĕçленĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем противника 20 окопран хĕссе кăларнă, 150 гитлеровеца вĕлернĕ тата 6 пулемет, 145 винтовка, пĕр радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăраллараxра пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла кайнă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски соединенин чаçĕсем халăх пурăнакан пысăк пунктшăн вăйлăн çапăçнă. Противник çав вырăна çĕнĕ вăйсем илсе пырса тăратнă, вăл шутра СС чаçĕсем те пур. Совет боецĕсем нимĕçсене укреплениссенчен хĕсе-хĕсе кăлараççĕ, тăшманăн техникипе чĕрĕ вăйне пĕтерсе пыраççĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем нимĕç пехотин пĕр паха рубежа хÿтĕлесе тăнă батальонне аркатса тăкнă. 600 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 7 танк тата 26 автомашина пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнĕ тата 3 танк, 2 броневик, 1 автомашина, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Хăшпĕр участокра противник вăйлăн хирĕç тăрать, контратакăсем тăвать. Совет боецĕсем гитлеровецсен контратакисене сире-сире ярса ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем икĕ кун хушшинче нимĕç пехотине икĕ батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, 7 танк, 2 бронемашина, боеприпассем тиенĕ 25 автомашина пĕтерсе тăкнă. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе нимĕçсен 2 самолетне ÿкернĕ. Тепĕр участокра гвардейски чаçсем нимĕçсен çавăрса илнĕ вырăнтан шăтарса тухма хăтланнă гарнизонĕн 12 атакине сирсе янă. Противникăн пĕтес патне çитнĕ гарнизонне çавăрса илнĕ совет войскисем ăна хĕснĕçемĕн хĕссе пыраççĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсен полковникне—пĕр пехотнăй полкăн командирне тыткăна илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен рубежĕсене тĕреклетнĕ, вĕсен пĕр пайĕ противникăн атакисене сирсе тăнă. Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть противникăн пехотипе танкĕсен йышлă вăйĕсем тунă темиçе контратакăна сирсе янă. 400 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, хăй тĕллĕн çÿрекен 3 тупа тата миномётсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, противникăн 16 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра совет войскисем çапăçса пырса малалла кайнă та халăх пурăнакан 40 пункта йышăнса илнĕ. Бекасов юлташ ертсе пыракан гвардеец-танкистсем тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Гварди лейтенанчĕн Буряшкинăн тата гвардин старши лейтенанчĕн Полищукăн танк экипажĕсем, халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайса, тăшманăн огневой точкисене пĕтерсе тăкнă. Пирĕн автоматчиксем, гитлеровецсен каялла чакмалли çулĕсене пÿлсе лартса, хаяр çапăçура нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕçсем ялсене çунтара-çунтара яраççĕ, кĕперсене сирпĕнтерсе хăвараççĕ, çулсене, землянкăсене, блиндажсене минăласа хураççĕ. Демин юлташ командир пулса тăракан чаçри саперсем виçĕ кун хушшинче 2.000 ытла минăна тупса сиенсĕрлетнĕ.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен Чапаев ячĕпе тăракан отрячĕ нимĕçсен вак гарнизонĕсене тапăнатапăна 53 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем 80 лаша, 3 пулемет, 32 винтовка тата 7.000 патрон тытса илнĕ. «За родину» ятлă отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ противникăн çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 6 вагон тата çар техники тиенĕ 2 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Сталинград районĕнче совет летчикĕсемпе зенитчиксем кашни кунах нимĕçсен транспортнăй самолечĕсене пере-пере ÿкереççĕ. Юлашки вăхăтра чылай нумай летчика тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ обер-ефрейтер, летчик-наблюдатель Пауль Шейн çапла каласа панă: «Декабрь уйăхĕнче пирĕн авиагруппа хăйĕн базине улăштарчĕ: Демьянскран кăнтăралла куçрĕ. Эпир Сталинград районĕнче çавăрса илнĕ нимĕç дивизийĕсем валли боеприпассемпе продовольстви турттараттăмăр. Эпĕ пĕр хут çеç ăнăçлăн вĕçсе тавăрăнтăм, Иккĕмĕш хутĕнче совет истребителĕ пирĕн «Юнкерс-52» самолета персе ÿкерчĕ, самолет çинче экипажсăр пуçне икĕ тонна çăкăр пурччĕ. Пирĕн отряд темиçе кун хушшинче хăйĕн самолечĕсенчен çуррине çухатрĕ. Çавăрса илнĕ нимĕç войскисен пурнăçĕ питĕ начар. Салтаксем вилнĕ лаша какайне те çиеççĕ»

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ленинград облаçĕнчи Пустошка ятлă ялти çынсене тискеррĕн тыткаланă. Гитлеровецсем çынсене пурне те урама хăваласа кăларнă та вĕсен пурлăхĕсене çаратса тухнă, унтан çурчĕсемпе хуралтисене çунтарса янă. Палачсем Копылов колхозникăн, Ануфриев бригадирăн тата Решетников учителĕн çемьисене касса тухнă. Нимĕçсем çитĕннĕ çынсене пурне те ирĕксĕрле ĕçе хăваласа кайнă.

Январĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Дон** шывĕн анатри районĕнче, **Центральнăй** фронтра тата **Çурçĕр Кавказра** малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем, штурмлакан группăсене уйăрăлса кĕрешсе, противникăн укреплениййĕсене çĕмĕрсе пынă. Тăшманăн 11 дзотне тата 7 блиндажне тытса илнĕ, 120 гитлеровеца вĕлернĕ, Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет разведчикĕсем, нимĕç окопĕсене кĕрсе кайса, 60 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата темиçе çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Противник артиллерирен персе тата танксемпе мотопехотăн вăйĕсемпе контратакăсем туса, совет войскисене малалла кайма чарасшăн. Пирĕн чаçсем, гитлеровецсем хирĕç тăнине сирсе ярса, нимĕçсен чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраççĕ тата малалла каяççĕ. Пĕр участокра гитлеровецсем уйрăмах вăйлăн хирĕç тăнă. Совет летчикĕсем, сывлăшран вăйлăн пыра-пыра çапса, тăшманăн орудийĕсемпе миномечĕсене пусарса лартнă. Унтан пирĕн танксем пехота десантне лартса атакăна кайнă та нимĕçсен пехотин икĕ батальонне аркатса тăкнă тата халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем нимĕçсен 9 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противника халăх пурăнакан пунктран хĕссе кăларнă. 4 оруди, 7 пулемет тата радиостанци тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен рубежĕсене тĕреклетнĕ, уйрăм участоксенче вĕсем противникăн контратакисене сирсе тăнă. Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра противникăн пехотипе танкĕсем пирĕн войскăсен позицийĕсене атакăлама хăтланнă. Н-ски соединенин боецĕсем, нимĕçсен 14 танкне тата 800 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкса, гитлеровецсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем çапăçса малалла куçса пынă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски соединенин боецĕсем 11 оруди, 26 миномет тата 23 пулемет тытса илнĕ. Çĕрле пирĕн пĕр подразделени тăшманăн окопĕсен çывăхĕнчех пĕр çĕра пухăнса тăнă, тепĕр подразделени противникăн тылне сăрхăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем нимĕçсене пĕр вăхăтрах фронтран тата тылран атакăланă та вĕсен çапăçу речĕсене арпаштарса янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕннисем тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсем вĕсене тапăнма хăтланни çинчен пĕлнĕ. Разведка каратепьнăй отрядăн йышне тата нимĕçсем хăçан, мĕнле вырăнта пырса çапма шутланине пĕлнĕ. Партизансем гитлеровецсене маларах пырса çапма шут тытнă. Совет патриочĕсем, сасартăк пырса тапăнса, нимĕçсен карательнăй экспедицине аркатса тăкнă. Çав çапăçура нимĕçсен 83 салтакне вĕлернĕ, 40 салтакне амантнă. Витебск облаçĕнчи 3 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 3 паровоз, 8 вагон тата 18 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Крушенисем вăхăтĕнче 150 гитлеровец ытла пĕтнĕ.

* * *

Югославири партизансем Теслич хулине тытса илнĕ. Хаяр çапăçура вĕсем нимĕç пехотин икĕ батальонне аркатса тăкнă. Нумай гитлеровеца тыткăна илнĕ. Тĕрлĕ калибрлă 9 оруди тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Партизансен икĕ отрячĕ Турека тата Шкоцяна ятлă халăх пурăнакан пунктсене тапăнса темиçе вуншар итальянец салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Теслич па Добой хушшинчи чугунçул çинче противникăн 3 çар эшелонне тата пĕр бронепоездне ÿпĕнтерсе янă.

Мускав, ВКП(б) Центральный Комитетне СТАЛИН юлташа

ХАКЛĂ ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ!

Эпĕ 63 çулта, манăн виçĕ ывăл пирĕн хаклă тăван çĕршыва хÿтĕлеççĕ, вĕсенчен пĕри — танкист. Тăван çĕршыври колхозниксемпе колхозницăсен ырă примерне йышăнса, эпĕ хамăн перекетлесе хăварнă 110 пин тенкĕ укçана танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума патăм.

Гитлерла вăрă-хурахсене вилĕм!

Чăваш АССР-чи Пăрачкав районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕ АНДРЕЙ ФЕДОРОВИЧ ПУГАЧЕВ.

Танксен колоннисемпе самолетсен эскадрильисене тума

КАНАШ, январĕн 8-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума январĕн 7-мĕшĕ тĕлне 1.927.000 тенкĕ укçа пухса государство банкне хывреç. Ямаккассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 118.000 тенкĕ, Ахпÿртри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 108.000 тенкĕ, Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхоз членĕсем 120.000 тенкĕ пухнă, «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхоз председателĕ Михаил Антонович Антонов юлташ танксен колоннине тума хăйĕн перекетлесе хăварнă 25.000 тенкине пачĕ.

Л. ЗНАМЕНСКАЯ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ТĂВАЙ, январĕн 8-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Колхозниксемпе колхозницăсем тата служащисем танксен колоннисене тума укçа пухнă çĕре активлăн хутшăнаççĕ. Январĕн 7-мĕшĕ тĕлне район танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1.275.802 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 49.257 тенкĕ, танксен «Народный учитель» колоннине тума 10.451 тенкĕ тата боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума 292.719 тенкĕ пухнă. Ку ĕçре уйрăмах «Красная Чувашия» колхоз членĕсем палăрса тăраççĕ. Вĕсем танксен колоннине тума 90.000 тенкĕ, боевой самолетсен эскадрильне тума 292.719 тенкĕ пухнă. Вăтă пахчаçă Т. Васильев юлташ 10.000 тенкĕ, комсомолка Галя Тимофеева 7.000 тенкĕ панă.

В. ИЛЬИН.

КАШНИ КУН 2 НОРМА

УЛАТĂР, январĕн 8-мĕшĕ. (**Телефонпа**). «Сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăх» колхоз членĕ Сергей Федорович Егоров юлташ — леспромхозра тухăçлă ĕçлекен стахановец. Иртнĕ çулхи августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен вăл пĕр лашапа ĕçлесе 737 рауметр вутă турттарнă. Çапла вара чугунçул валли вутă турттармалли задание кашни кун вăтамран 200 процент тултарнă.

Стахановец С. Ф. Егоров юлташ халĕ те вăрмантах ĕçлет. Çĕнĕ çулта вăл çĕнĕ обязательство илчĕ: 1-мĕш кварталта татах та 700 кубометр турттарма пулчĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ
БУБУКИН,
Леспромхоз директорĕ
НАУМОВ.

Çулпуç саламне илнĕ хыççăн

ИЕПРЕÇ. Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене тата трактористсене танксен колоннисене тума укçа пухнăшăн тăванла салам янă тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунă хыççăн Упакассинчи «Путиловка» колхозра танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухас ĕç вăйланчĕ. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне колхозниксем çак ĕç валли 53.040 тенкĕ пухрĕç. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар фондне килти запасран 10 центнер çĕрулми, 1,5 центнер купăста тата сухан хывреç. Колхоз амбарĕсене хуралакан Федор Иванович Иванов колхозник 6.000 тенкĕ укçа, пĕр центнер çĕрулми пачĕ.

Отечественнăй вăрçăран аманса таврăннă П. Осипов, Т. Алексеев юлташсем çак ĕç валли çĕршер тенкĕ пачĕç. Çавăн пекех шкул заведующийĕ А. Сергеева юлташ та танксен колоннине тума хăйĕн икĕ уйăхри ĕçукçине, учитель А. Иванов пĕр уйăхри ĕçукçине — 250 тенкĕ хывреç. Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç малалла та пырать.

П. ФЕДОРОВ.

П. Петрикова юлташ 10.150 тенкĕ хывнă

ЭЛĔК, (Телефонпа). Районри çутĕç пайĕн заведующийĕ П. П. Петрикова, 27 çул учительница пулса ĕçленĕскер, танксен «Народный учитель» ятлă колоннине тума 10.150 тенкĕ укçа хывре. Унăн упăшки—Жданов ячĕпе тăракан колхозăн членĕ И. В. Петриков Хĕрлĕ Çар фондне 25 пăт ыраш тата 21 килограмм пыл хывре. Вĕсем иккĕшĕ те хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара пулăшма яланах хатĕр тăни çинчен Сталин юлташа çыру çырса ячĕç.

С. САПЕРКИН.

П. С. Петровпа Е. К. Кучерук—заводри чи лайăх мастерсем

КАНАШ. Мастерсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва лайăх организацилес тесе вагонсем юсакан заводра чи лайăх мастерсен аттестатне тунă. Аттестата социализмлă ăмăртура лайăх результатсем кăтартнă мастерсене параççĕ.

Çак кунсенче заводри жюри мастерсен иртнĕ уйăхсенчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Жюри ăмăртури чи лайăх результатсене инструментальнăй цехри мастер Петр Сергеевич Петров тата вагонсем юсакан цехри комплекснăй участок мастерĕ Ефрем Карпович Кучерук юлташсем кăтартнине палăртнă тата вĕсене «Канашри вагонсем юсакан заводри чи лайăх мастер» аттестачĕсене пама йышăннă.

Мастер Петров юлташ ертсе пыракан смена хăйĕн заданийĕсене уйăхран уйăха ирттерсе тултарать. Браксем тăвассине минимум таран чакарнă. Сменăра ĕç нормине тултарман рабочи пĕрре те çук.

Петров юлташ хăй — заводри паллă рационализатор. Рационализаторла сĕнÿсем вăл пĕрре çеç мар панă. Вĕсенчен иккĕшĕпе ĕçре усă курни заводa çулталăкне 20 пин тенкĕ перекет парать.

Мастер Е. К. Кучерук юлташ вагонсем юсанă çĕрте ĕçлет. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче вăл производствăна çĕнĕрен пынă çамрăксемпе пĕрле 20 вагон ытла юсанă. Унтан пример илсе, вагонсем юсакан цехри ытти мастерсем те ремонт ĕçне хăйсем хутшăнаççĕ.

Заводри пур мастерсен те П. С. Петровпа С. К. Кучерук юлташсенчен пример илмелле, вĕсем пек ĕçлеме вĕренмелле.

(**«Вагонник» хаçатран**).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Елчӗк районӗнчи коммунистсен пухӑвӗ

Ҫак кунсенче Елчӗкре пулса иртнӗ коммунистсен районри пухӑвӗ ВКП(б) Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗн итогӗсем ҫинчен ВКП(б) райком секретарӗн Волков юлташӑн докладне итлесе сӳтсе яврӗ.

— Вӑрҫӑ вӑхӑтне пӑхмасӑр,—тет докладчик, — районри малта пыракан «Марс», Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ. Вӗсем государство умӗнчи парӑмсене татрӗҫ, авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ. ВКП(б) Центральный Комитечӗпе СССР Совнаркомӗ ҫамрӑк выльӑхсене пӑхса ӳстерес тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе йышӑннӑ постановленине пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласа пырса, район выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе паллӑ ҫитӗнӳсем турӗ. Январӗн 1-мӗшӗ тӗлне район майракаллӑ шултӑра выльӑхсем ӗрчетмелли 1942 ҫулти плана 100,5 процент, сурӑхсемпе качакасем ӗрчетмелли плана 104 процент, сыснасем ӗрчетмелли плана 104,5 процент тултарчӗ. Иртнӗ ҫулгипе танлаштарсан, машинно-тракторнӑй станци те хӑйӗн ӗҫне чылай лайӑхлатрӗ. Вӑл тракторпа тумалли ҫулталӑкри ӗҫсен планне 115 процент, комбайнпа тырӑ вырса пуҫтармалли плана 114 процент пурнӑҫларӗ.

Анчах, пӗтӗмӗшпе илсен, район 1942 ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра вӗҫлеймерӗ. Уйрӑмах авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ парас ӗҫсем кая тӑрса юлчӗҫ. Район январӗн 1-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапас плана 91,8 процент, государствӑна тырӑ парас плана 77,6 процент ҫеҫ пурнӑҫларӗ. «Коммунист», «Сатурн» тата «Коминтерн» колхозсем уйрӑмах сӳрӗккӗн ӗҫлерӗҫ. «Сатурн» колхоз председателӗ коммунист Краснов, ӑна ВКП(б) райкомӗн бюровӗ темиҫе хутчен те начар ӗҫлени ҫинчен асӑрхаттарнӑ тата ялхуҫалӑх ӗҫӗсене хӑвӑртлатма мерӑсем йышӑнма хушнӑ пулин те, ҫав кӑтартӑва пурнӑҫа кӗртмерӗ, ҫавна пула колхозри ялхуҫалӑх ӗҫӗсем вӑраха тӑрса юлчӗҫ.

Район ҫитес ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе те сӳрӗккӗн ӗҫлет. Январӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӑрлӑх фончӗ 77,8 процент чухлӗ ҫеҫ хывнӑ, акмалли вӑрлӑхӑн 30,5 процентне ҫеҫ сортланӑ. Районра ҫӗрулми вӑрлӑхӗ 80,5 процент чухлӗ ҫеҫ хатӗрленӗ. Ҫапла ӗнтӗ район тата колхозсен руководителӗсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче иртнӗ ҫул пулнӑ ҫитменлӗхсене кӑҫал та пӗтермен.

Коммунистсен пухӑвӗ ҫак ҫитменлӗхсене палӑртса, айӑплисене хытӑ критиклерӗ. Колхозсен тата ялсоветсен руководителӗсене тата СССР Хатӗрлев Наркомачӗн районри уполномоченнӑйне ҫывӑх кунсенчех государство умӗнчи парӑмсене парса татма, райҫӗрӗҫ пайне авӑн ҫапса пӗтерме татӑклӑ мерӑсем йышӑнма хушрӗ.

Пухура 16 ҫын тухса каларӗҫ. Вӗсем район ялхуҫалӑх ӗҫӗнче кая юлнине, вырӑнти тата кооперативнӑй промышленность предприятийӗсем начар ӗҫленине палӑртрӗҫ. «III Интернационал», «Пахарь» артельсем 1942 ҫулти производство планне тултарайман. Вӗсем вырӑнти ресурссемпе кирлӗ пек усӑ курма пӗлмеҫҫӗ.

Пуху ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫа кӗртмелли мероприятисене палӑртса, тивӗҫлӗ решенисем йышӑнчӗ.

А. ЧЕРНОВ.

Пирӗн паттӑр землякасем парти ретне кӗреҫҫӗ

(Фронтовиксен ҫырӑвӗсенчен)

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ хирӗсенче пирӗн паттӑр землякасем ҫӗршыв мухтавне тивӗҫлӗ ӗҫсем тӑваҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн пӗр чаҫӗнче чӑваш лейтенант Илья Константинович Константинов мухтавлӑ ӗҫсемпе палӑрса тӑрать. Вӑл Елчӗк районӗнчи Карабай ялӗнчен. Вӑл боецсемшӗн тӑванла тӑрӑшакан командир. Унӑн подразделенийӗнчи боец-истребительсем нимӗҫ ирсӗрӗсене паттӑррӑн пыра-пыра ҫапаҫҫӗ, пӗтерсе пыраҫҫӗ. 1942 ҫулти ноябрь уйӑхӗнче кӑна вӗсем 14 белофина пӗтерне, Константинов юлташ хӑй пӗр фашиста вӗлерне. Халӗ Константинов юлташа парти членӗн кандидатне илнӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫлансанах пирӗн земляк Акшев юлташ гитлеровецсемпе Старая Русса патӗнче ҫапӑҫнӑ. Унта вӑл аманнӑ. Сывалнӑ хыҫҫӑн Акшев юлташ Тихвин патӗнчи ҫапӑҫусенче пулнӑ. Унта вӑл хӑй хӑюллӑ боец-разведчик пулнине кӑтартнӑ. Командир заданийӗ тӑрӑх, вӑл нимӗҫсен тылне шӑтарса кӗнӗ, тӑшманӑн огневой точкисем ӑҫта вырнаҫнине тата нимӗҫ полкӗн штабӗ хӑш ҫуртра вырнаҫнине шыраса тупнӑ. Акшев юлташ пулӑшнипе пирӗн мухтавлӑ артиллеристсем противникӑн огневой точкисемпе штабне ҫийӗнчех пӗтерсе тӑкнӑ.

Акшев юлташа (халӗ вӑл оруди командирӗ) Ленинла-Сталинла парти ретне илнӗ. Вӑл ертсе пыракан оруди расчечӗ тӑшмана пысӑк сиен кӳрет. Юлашки виҫӗ уйӑх хушшинче унӑн расчечӗ 50 белофина пӗтерсе тӑкнӑ. Акшев юлташ Комсомольски районри Урмаево ялӗнче ҫуралнӑ.

Малта пыракан ҫамрӑксем комсомол ретне кӗреҫҫӗ

ОКТЯБРЬСКОЕ, январӗн 8-мӗшӗ. (Телефонпа). Райвоенкоматра призыва пыракан ҫамрӑксене комсомол ретне илес шутпа комсомолӑн пуҫламӗш организацине турӑ. Вӑл организаци кӗске вӑхӑт хушшинчех 122 призывнике Ленинла-Сталинла комсомол ретне илнӗ.

П. ЛЕНАР.

* * *

КАЛИНИНО. Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне тата Калинин юлташӑн статьисене ӑнлантарнӑ хыҫҫӑн, Калининӑри педагогика училищинче вӗренекенсем комсомол ретне кӗме пуҫларӗҫ. 1942—1943-мӗш вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑранпа унта 30 вӗренекене комсомола илнӗ. Вӗсенчен нумайӗшӗ — вӗренӳре малта пыракансем. И. Иванов, С. Смирнов юлташсем пур предметсемпе те «отлично» вӗренсе пыраҫҫӗ.

Т. ФИЛИППОВ.

Вырӑнти удобренисене хатӗрлесе турттармалли уйӑхлӑх

Уйӑхлӑха пур колхозсен те хутшӑнмалла

КАЛИНИНО. Уя мӗн чухлӗ нумай тарах тислӗк тата ытти удобренисем кӑлараҫҫӗ, ҫавӑн чухлӗ тырпул нумайрах пулать. Малта пыракан колхозсем вырӑнти удобренисем хатӗрлес ӗҫе тимлӗн туса пыраҫҫӗ. Райҫӗрӗҫ пайӗ халь пыракан уйӑхлӑхра уя тислӗк кӑларас тата ытти удобренисене пухса хатӗрлес тӗлӗшпе кашни колхозах заданисем панӑ, ӗҫе график тӑрӑх туса пыма хушнӑ. Январӗн 1-мӗшӗпе февралӗн 28-мӗшӗ хушшинче районри колхозсен уя 27 пин тонна тислӗк, 6 пин тонна торф кӑлармалла тата 250 тонна минераллӑ удобрени турттарса хатӗрлемелле.

Уйӑхлӑхӑн малтанхи эрнинче колхозсем уя 11.936 лав тислӗк кӑларчӗҫ. Малтанхи кунсенчех хӑшпӗр колхозсем кӑтартса панӑ плана ирттерсе пурнӑҫларӗҫ. Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз уя 1.750 лав тислӗк, Сӑкӑтри Буденный ячӗпе тӑракан, Турикарачурари «Ленин ҫулӗпе» колхозсем 1000-шер лав кӑларнӑ. Шӗнерти «1-ое Мая» колхозра кӗл пухас тӗлӗшпе шкулта вӗренекен ачасем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах та, калас пулать, вырӑнти удобренисене пухса, уя кӑларас ӗҫе районра пур колхозсенче те туса пымаҫҫӗ-ха. Уйӑхлӑхран аякра тӑракан колхозсем те пур. Тӗслӗхрен, Чӑрӑш Хирлепри «Радио», Хурапырти «КИМ», Кушар Юнтапари Каганович ячӗпе тӑракан тата Кивкасри «Большевик» колхозсем вырӑнти удобренисем пухса хатӗрлес тата уя тислӗк кӑларас ӗҫе пачах тытӑнман.

Б. ШОРНИКОВ.

ВӐЙЛӐ ТЫРПУЛШӐН КӖРЕШӲ ӲСЕТ

КӲКЕҪ, январӗн 8-мӗшӗ. **(Телефонпа).** 1942 ҫулти тырпулсене пӗтӗмӗшпех ҫапса пуҫтарнӑ, государствӑна тырӑ тата техникӑллӑ культурӑсем памалли плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн, халь районри колхозсенче кӑҫал татах та вӑйлӑрах тырпул туса илессишӗн кӗрешӳ сарӑлса пырать. Январӗн 1-мӗшӗ тӗлне районри пур колхозсем те кӑҫал ҫуркунне акмалли вӑрлӑхсене уйӑрса ҫитерчӗҫ. Вир, хуратул, тулӑ тата ытти чылай культурӑсен вӑрлӑхӗсене акма палӑртнӑ виҫерен ытларах уйӑрса хунӑ. Уйӑрнӑ вӑрлӑхсен 52 процентне триерсемпе тасатнӑ.

1943 ҫулхи ҫуракине «Память Ленина» колхоз кӑтартуллӑн хатӗрленет. Колхоз акма кирлӗ вӑрлӑхсене пӗтӗмӗшпех уйӑрса хунӑ, триер витӗр кӑларса тасатнӑ, сортланӑ, акмалли кондицие ҫитернӗ. Ялхуҫалӑхӗнчи машинӑсене пурне те ремонтласа ҫуракине тухма хатӗрлесе лартнӑ.

Районӗпе илсен, паянхи куна пурӗ 11 колхоз ҫуракинче ӗҫлемелли машинӑсемпе ӗҫ хатӗрӗсене юсаса ҫитернӗ.

Халӗ нумай колхозсенче вырӑнти удобренисене пухса уя кӑларас ӗҫ хӗрӳллӗн пырать. Январӗн малтанхи пилӗк кунӗнче уя пурӗ 4.030 тонна тислӗк кӑларнӑ. Лапсар ялсоветӗнчи Крупская ячӗпе тӑракан колхоз Шупашкар хулинчен 45 лав тислӗк турттарса килнӗ. «Красный Герой» колхоз 25 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ.

Л. ДАНИЛОВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ.

Ялхуҫалӑхӗнчи научнӑй работниксен конференцийӗ

Январӗн 5-мӗшӗнче, Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗн залӗнче ялхуҫалӑх наукипе производствинче ӗҫлекен работниксен конференцийӗ уҫӑлчӗ. Конференцие кӗске сӑмахпа Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗн директорӗ Калинцев юлташ уҫрӗ. Конференци президиумне пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса, ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗсене Чарыков, Белков юлташсене, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председательне Андреева юлташа, Халӑх Комиссарӗсен Совӗчӗн председательне Матвеев юлташа, ЧАССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарне Малов юлташа, ВКП(б) Обкомӗн ҫӗрӗҫ отделӗн заведующине Мартынов юлташа тата ялхуҫалӑх институчӗн профессорӗсене Пельцих, Найденов, Замятин юлташсене суйларӗҫ.

Пурте тӑвӑллӑн алӑ ҫупса хисеплӗ Президиума ВКП(б) Центральный Комитечӗн Сталин юлташ ертсе пыракан политбюро членӗсене тата Комаров, Лысенко академиксене суйларӗҫ.

Конференцие Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗн профессорӗсемпе преподавателӗсем, Ҫӗрпӳри зоотехникӑпа селекционнӑй станцисен сотрудникӗсем, ВКП(б) райкомӗсен хӑшпӗр секретарӗсем, МТС директорӗсем тата районри ҫӗрӗҫ отделӗсен главнӑй агрономӗсем пуҫтарӑннӑ.

Конференци уҫӑлнӑ кун Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Малов юлташ ялхуҫалӑхӗн 1942 ҫулхи итогӗсем ҫинчен тата ялхуҫалӑхӗ умӗнче 1943 ҫулта тӑракан задачӑсем ҫинчен доклад туса пачӗ.

Конференцие пухӑннисем ВКП(б) Центральный Комитечӗн секретарӗ Андреев юлташ патне, СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Бенедиктов юлташ патне, аслӑ шкулсен Пӗтӗм Союзри Комитечӗн председателӗ Кафтанов юлташ патне ямалли саламлӑ телеграммӑсен текстӗсене тӑвӑллӑн алӑ ҫупса йышӑнчӗҫ.

Январӗн 6-мӗшӗнчи иккӗмӗш ларура тракторсене тухӑҫлӑрах ӗҫлеттерессишӗн тата горючие перекетлессишӗн кӗрешесси ҫинчен техникӑллӑ наукӑсен кандидачӗн А. В. Тарчевский доцентӑн докладне итленӗ.

Январӗн 6-мӗшӗнчи каҫхи ларура сахӑр кӑшманне пӑхса ӳстересси ҫинчен, сахӑр кӑшманӗсене сиенлекенсемпе чирӗсем ҫинчен, сахӑр кӑшманӗнчен килтех сахӑр тума май пурри ҫинчен тунӑ докладсене итленӗ. Пӗррӗмӗш ыйтупа Л. Пельцих профессор, иккӗмӗшӗпе — ялхуҫалӑх наукисен кандидачӗ доцент Тураев, виҫҫӗмӗшӗпе — Фощенко инженер доклад турӗҫ.

Январӗн 7-мӗшӗнчи тӑваттӑмӗш ларура Чӑваш республикинче кок-сагыз туса илесси ҫинчен Воробьев доцентӑн докладне, Чӑваш республикинче ҫу паракан ӳсентӑрансем ҫитӗнтерессси ҫинчен Пельцих профессорӑн докладне тата ҫӗрулми тухӑҫне ҫӗнӗ майпа ӳстересси ҫинчен селекционнӑй станци директорӗн Лихачев юлташӑн докладне итленӗ.

Конференци хӑйӗн ӗҫӗсене малалла туса пырать.

Вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫе хӑвӑртлатмалла

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗ хӑйӗн резолюцийӗнче, республикӑри колхозсенче вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫ кая юлса пынине палӑртса, ҫапла ҫырнӑ: «Вӑрлӑх хывас ӗҫе январӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр тата унӑн пахалӑхне лабораторисенче тӗрӗслес ӗҫе январӗн 20-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлеме хушас», тенӗ.

Пленум решенине тӗплӗн пурнӑҫласа пырса, Вӑрнар, Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗр тата ытти хӑшпӗр районсенчи колхозсем ҫуракинче акмалли тырӑсен тата техникӑллӑ культурӑсен вӑрлӑхӗсене ҫителӗклӗ таран уйӑрса хунӑ, уйӑрса хунӑ вӑрлӑхсен 50—60 процентне триерсемпе тасатнӑ. Вӑрнар районӗнчи колхозсем, тӗслӗхрен, ҫуркунне акма вӑрлӑхсене планпа пӑхнинчен чылай нумайрах уйӑрса хунӑ тата вӗсене пӗтӗмӗшпех триерпа тасатнӑ.

Анчах та, пӗтӗмпе илсен, республикӑра вӑрлӑх фондне тӑвас ӗҫ паян кун та начар пулса пырать-ха. Чылай районсем вӑрлӑх уйӑрса хурас, сортласа тасатас ӗҫре пленумӑн решенийӗ хыҫҫӑн та нимӗнле улшӑну та тумарӗҫ. Уйрӑмах Шӑмӑршӑ, Первомайски, Кувакино, Чкаловски районсенче пленумӑн постановленине пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе пачах ӗҫлемеҫҫӗ. Ку районсенче райсовет исполкомӗсем те, ҫӗрӗҫ органӗсем те районри колхозсенче вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫе кирлӗ пек ертсе пымаҫҫӗ. Шӑмӑршӑ районӗ вӑрлӑх хатӗрлес тӗлӗшпе республикӑра чи кайра пырать.

Вӑрлӑхлӑх клевера ҫапса шӗкӗлчес ӗҫ те чӑтма ҫук кая юлса пырать. Ҫакӑн пирки ВКП(б) райкомӗсен халех кирлӗ мерӑсем йышӑнмалла. Вӑрлӑхлӑх клевера шӗкӗлчесе ҫуркунне акма хатӗрлес ӗҫе кая хӑварма юрамасть.

Вӑрлӑхлӑх тырӑ тата техникӑллӑ культурӑсем хатӗрлес ӗҫ Октябрьски районри колхозсенче халӗ те тӗп вырӑнта тӑмасть-ха. Районри хӑшпӗр колхозсен руководителӗсем вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫ ҫине тивӗҫлипе пӑхмаҫҫӗ, райҫӗрӗҫ пайӗ енчен те вӗсене васкатни курӑнмасть. 1943 ҫула кӗтӗмӗр, ҫураки ҫывӑхарса килет. Октябрьски район пӗр тӗслӗ тырӑсен вӑрлӑхне те ҫителӗклӗ таран уйӑрса хуман-ха, вӗсене тасатса сортлас ӗҫе халь ҫеҫ тытӑннӑ.

Кӑҫал клевер вӑрлӑхне аякран илсе акас шухӑша халех пуҫран кӑларса пӑрахмалла. Аякран илсе килмелле мар, хамӑр лартса тунӑ клевера шӗкӗлчесе вӑрлӑх тумалла пирӗн кӑҫал, клевер акмалли пӗтӗм лаптӑка пирӗн паха вӑрлӑхсемпе акса хӑвармалла.

Вӑрлӑх тыррине халь ҫителӗклӗ таран уйӑрса тасатса хатӗрлемен ҫуракинче пӗтӗм района йывӑрлӑх умне кӑларса тӑратать. Иртнӗ ҫулта вӑрлӑхсене вӑхӑтра хатӗрлесе хуманни, вӗсен пахалӑхӗшӗн кирлӗ пек кӗрешменни 1942 ҫулти тырпулӑн тухӑҫлӑхӗнче курӑнчӗ. Ҫавӑн пек йӑнӑша эпир урӑх тума пултараймастпӑр. ВКП(б) райкомӗсен, райисполкомсен ялсовет исполкомӗсемпе колхоз правленийӗсене вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫре халех улшӑну тума хушмалла, ҫуркунне акмалли вӑрлӑхсене халех уйӑрса хуртармалла. ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIII-мӗш пленумӗн решенийӗсене пӗр пӑркаланмасӑр вӑхӑтра пурнӑҫламалла.

Ют ҫӗршывсенче

ТУРЦИРИ ХАҪАТСЕМ СОВЕТ ВОЙСКИСЕН ҪӖНӖ ӐНАҪАВӖСЕМ ҪИНЧЕН МӖН ҪЫРАҪҪӖ

АНКАРА, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Хӗрлӗ Ҫарӑн чаҫӗсем наступлени тунипе тата вӗсем ҫапӑҫура тунӑ ӑнӑҫусемпе Турцири халӑхӑн пур сийӗсем те питӗ интересленеҫҫӗ. Хаҫатсем ҫав ӑнӑҫусем ҫинчен нумай ҫыраҫҫӗ.

«Анадолу» хаҫат хӑйӗн умстатьинче Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтра Германи армийӗсен лару-тӑрӑвӗ мӗнле пулса тӑни ҫинчен тата совет войскисем наступлени туни ҫинчен каласа, ҫакна палӑртать: Хӗрлӗ Ҫар вӑйлӑн пыра-пыра ҫапнине пула нимӗҫсен хӗл пуҫланиччченех оборонӑна куҫмалла пулчӗ. Халӗ нимӗҫ войскисем сарлака фронтра каялла чакса пыраҫҫӗ, хӑйсем малтан тытса илнӗ паха районсене тата стратегиллӗ пунктсене пӑраха-пӑраха хӑвараҫҫӗ.

ТРИПОЛИТАНИРИ ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаҫатӑн корреспонденчӗ, Триполитанире Англин 8-мӗш армийӗпе пӗрле куҫса пыраканскер, ҫапла пӗлтерет: тӗнӗл держависен войскисем чул ҫыранлӑ, типнӗ, тарӑн ҫырма тӑрӑх укреплениссем тӑваҫҫӗ, ҫав ҫырма вӑл Ваги-Земзем ятлӑ. Вӑл Мисуратӑран 80 миля хӗнтӑралларахра выртать. Роммель войскисен ҫыхӑнӑвӗсен линийӗ кӗске, англичансен ҫыхӑнӑвӗсен линийӗ вара питӗ тӑсӑлса кайнӑ. Кунсӑр пуҫне, Роммелӗн лайӑх аэродромсем пур. Анчах апла пулсан та, тет корреспондент, Ваги-Земзем патӗнчи позици вӑл вӑхӑтлӑх позици ҫеҫ, англичансене пӗр вӑхӑта тытса чарма тунӑ позици ҫеҫ пулса тӑрать. Ваги-Земземӑн укрепленийӗсем Эль-Агейла патӗнчи укрепленисенчен чылай начартарах. Ваги-Земзем патӗнчи позицисен тӗп ҫитменлӗхӗ вӑл — флангсенче естественнӑй рубежсем ҫукки пулса тӑрать, тет.

ТУНИС ФРОНТӖНЧЕ ӖҪСЕМ МӖНЛЕ ПЫРАҪҪӖ

ЛОНДОН, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин специальнӑй корреспонденчӗ, Ҫурҫӗр Африкӑра Америка войскисемпе пӗрле ҫӳрекенскер, ҫапла пӗлтерет: ӗнер нимӗҫсем контратака туса Матертан хӗвеланӑҫнерехри ҫулсем хӗресленекен паха вырӑнӑн икӗ енӗпе выртакан высотасене ҫӗнӗрен тытса илнӗ. Ҫав высотасене Англин пехотнӑй бригади нимӗҫсенчен январӗн 5-мӗшӗнче тытса илнӗ пулнӑ.

—o—

Йӗлтӗрпе тренировкӑсем туса ирттереҫҫӗ

Калинино педучилищинче вӗренекенсене хӗллехи спорт валли кашнинех пӗрер мӑшӑр йӗлтӗр валеҫсе пачӗҫ. Мӗнпур вӗренекенсене 14 командӑна уйӑрнӑ. Халӗ вӗсем расписанипе йӗлтӗрлӗ тренировкӑсем туса ирттереҫҫӗ. Сӑмахран, 1, 2, 3, 4-мӗш командӑсем (командирӗсем Егорова, Сергеев, В. Иванов, Е. Куликов) икӗ хутчен 5 километрлӑ походсем туса ирттерчӗҫ. Кашни вӗренекенех ГТО тата БГТО хӗллехи нормине пама тӑрӑшаҫҫӗ.

А. ФИЛИППОВ.

Леонид Аганов

Пӗрре, тӗттӗм каҫ...

КАЛАВ

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 6-мӗш номӗрте).

Бойков проводӑн пӗр вӗҫне тӳрлетсе хучӗ те, тепӗр вӗҫне шырама тупатсем айне кӗрсе кайрӗ. Анчах темле хыпашласан та, провод нимпе те алла лекмерӗ. Ирӗксӗрех ик-виҫӗ хутчен шӑрпӑк ҫутса пӑхмалла пулчӗ. («Ку сӗм вӑрмантра мана никам та курас ҫук-ха..:»—шухӑшларӗ Бойков). Шӑрпӑк ҫутни чӑнах та провода тупма пулӑшрӗ вара.

— Пулчӗ!—савӑнӑҫлӑн сывласа ячӗ те Бойков, провод вӗҫӗсене васкасах ҫыпҫа пӗрлештерме тытӑнчӗ.—Халь ӗнтӗ хуть те мӗн чухлӗ калаҫ..: Хуть Баку, хуть Хабаровск пултӑр!—мӑкӑртатрӗ хӑй тӗллӗн.

Вӑл пӗр хушӑ ҫавӑнтах канса ларчӗ. Калама ҫук ӗҫес килнипе, кӑпӑшка юра ывӑҫла-ывӑҫла хыпрӗ. Унтан, чӗри ҫӑмӑлтах лӑпланнӑ пек пулсан, линии тӑрӑх малалла утрӗ. Уҫланкӑ урлӑ каҫрӗ. Ҫав вӑхӑтра—инҫетре те мар—темиҫе тунӑ пӗр харӑс ухлатрӗҫ. Самантлӑха йывӑҫсем тӑррипче ҫулӑм кӗлти вӗлтлетсе илчӗ. Снарядсем сивӗ сывлӑша ҫурса, Бойковӑн пуҫӗ урлӑ нимӗҫсен позицийӗсем ҫинелле шӑхӑрса кайрӗҫ..:

— Ага-а, пуҫларӗҫ хайхисем!..—чухах кӑшкӑрса яратчӗ Бойков. Унӑн чӗри сасартӑках ҫавтери ӑшӑ савӑнӑҫпа тулса ларчӗ: паллах—линие тӳрлетни тӗрӗс пулнӑ, вӗсен батальонӗпе батарея хушшинче телефон каллех ӗҫлеме пуҫланӑ, ҫавӑнпа та артиллеристсем пеме тапратрӗҫ. Нимӗҫсене—хӑйсем калашле—капут халь!

Вӑл хӑйӗн ҫийӗпе вӗҫсе иртекен снарядсене куҫпа курма пултарнӑ пекех, пӗр вӑхӑт хӗвелтухӑҫнелле пӑхса тӑчӗ те, батарея патне часрах ҫитес шутпа тепӗр еннелле ҫаврӑнчӗ. Анчах ҫав самантрах юпа пек хытса тӑчӗ..: Умри йывӑҫсем хушшинчен сасартан та вуншалӗк-ҫирӗм ҫын чупса тухрӗҫ.

— Хальт!*)

— Стой, рус!

— Хенде хох!*)—пӗр харӑс темиҫе тӗрлӗн кӑшкӑрса ячӗҫ вӗсем. Ют сӑмахсем Бойкова ҫара ӳтрен пушӑпа туртса ҫапнӑ пек ҫунтарса илчӗҫ. Вӑл часрах юр ӑшне выртса, патронсем пур таран хирӗҫ перес тесе шухӑшларӗ — халь тин ӗлкӗреймесрӗ ҫукки курӑнчӗ. Ҫуллахи пилоткӑсем тӑхӑннӑ, пуҫӗсене хӗрарӑм тутрисемпе, темле ула-чӑла кипкесемпе чӗркесе пӗтернӗ нимӗҫ салтакӗсем ӑна пур енчен те ҫавӑрса илсе, автомачӗсемпе тӗллерӗҫ. Бойковӑн ним тума та май килмерӗ..: Ӗлкӗреймерӗ вӑл..: Пӗр нимӗҫӗ унӑн аллинчи винтовкӑна тытса илчӗ, тепри хулпуҫҫинчен ҫакнӑ катушкӑна туртса антарчӗ, виҫҫӗмӗшӗ сумкине илсе ҫавӑнтах ухтарма тапратрӗ, тахӑшӗ ун аллисене каялла пӑрса ҫыхса лартрӗ. Хӑйсем чарӑна пӗлмесӗр пакӑлтатрӗҫ.

— Мӑн ҫул ҫинчи хурахсем пекех..:.

—шухӑшларӗ Бойков.

— Идьем!—терӗ ҫав вӑхӑтрах пӗр вӑрӑм хыткан нимӗҫӗ, ӑна ҫурӑмӗнчен автомат кӗпҫипе тӗртсе.—Ходи вперед!

Бойков итлерӗ, нимӗҫ ун хыҫҫӑн утрӗ. Пуҫри шухӑшсем ҫавраҫил пек ҫаврӑнма тытӑнчӗҫ.

— Мӗн тӑваҫҫӗ-ши ӗнтӗ? Персе вӗлерме илсе каяҫҫӗ-ши? Тӑрук вӗлерсен—авантарахчӗ... Асап курас марччӗ. —Унӑн куҫӗ умне йӑпӑртах хӑй курнӑ хӑрушӑ картинӑсем тухса тӑчӗҫ: ял урамӗсенчи йывӑҫсенчен ҫакнӑ колхозниксем, ҫурӑмӗсем ҫинче ҫӗҫӗпе ҫӑлтӑрсем касса кӑларнӑ, пичӗ-куҫӗсене штыксемпе чиксе пӗтернӗ красноармеецсем, пуҫӗсене прикладсемпе ҫапса аркатнӑ пӗчӗк ачасем..:—Хӑйсем валли «чӗлхе» тупрӑмӑр тесе шутлаҫҫӗ пулсан—питӗ йӑнӑшаҫҫӗ-ха вӗсем, манран тем тусан та пӗр сӑмах та илтеймӗҫ. Анчах.., мӗншӗн-ха вӗсем мана хӑйсем патнелле мар, пирӗн тыл еннелле илсе каяҫҫӗ?

Самантлӑха шухӑшлама чарӑнса, Бойков йӗри-тавралла пӑхса илчӗ. Нимӗҫсем ӑна чӑнах та батарея тӑпӑ ҫӗрелле илсе пынӑ. Акӑ ӗнтӗ, тупӑ сассисем ҫывӑхрах илтӗнеҫҫӗ, 300—400 метртан аякра та мар.

— Мӗне пӗлтерет ку?—тата ытларах пӑлханса кайрӗ Бойков.—Мӗн шут тытнӑ ку шуйттансем?

Ҫил-тӑман ку хушӑра майӗпе лӑпланма пуҫларӗ, йӗри-тавралла чылаях курӑнакан пулчӗ. Пӗр ҫирӗм минута таттисӗр кӗрленӗ батарея пеме чарӑнчӗ,—кун чухлӗ пенипе ҫитет тесе пӗлтерчӗҫ пулмалла малти позицирен. Вӑрманта каллех шӑп пулса тӑчӗ. Инҫотре пулеметсем кӗскен-кӗскен такламни илтӗнчӗ те, хутран-ситрен пӗлӗтелле шурӑ ракетӑсем ялкӑшса хӑпарни курӑнчӗ.

Нимӗҫсем Бойкова вӑрман хӗррине илсе тухрӗҫ. Малта—тип-тикӗс хир тӑсӑлса выртать, унтан каллех вӗтлӗх пуҫланать. Ку ҫамрӑк хурӑнсем хушшинче—пирӗн батарея пытанса ларнӑ, ҫавӑнтан вӑл кашни кирлӗ самантрах нимӗҫсем ҫине вилӗм сапать—хуш кӑна...

— Стой, русс, тихо,—терӗ вӑрӑм хыткан нимӗҫ, ҫаварне хуплама пуҫланӑ хӗрарӑм тутрине тӳрлетсе.—Говори, где батарей. Не говоришь—капут!

Вӑл хӑй автомачӗн кӗпҫине Бойков пичӗ патне тытса ҫавӑркаларӗ. Ыттисем ҫурӑмӗ хыҫӗнчех тӑчӗҫ.

— Авӑ мӗн иккен!—тавҫӑрса илчӗ Бойков.—Вӗсем пирӗн батарейӑна тапӑнасшӑн! Питӗ чее хӑтланасшӑн, йытӑсем...

— Твой знайт! — терӗ ҫав нимӗҫех, аллипе малалла кӑтартса. — Место знайт, пропуск знайт, пароль знайт! Ми дольжен ходить на батарей, ти дольжен ходить вперйод... Понимайт?

Бойков чӗнмерӗ. Вӑл нимӗҫӗн сӑмахӗсене пӗтӗмпех ӑнланчӗ, анчах—тӑрукках ответ пама пултарнӑ-и-ха вӑл? Батарея, тӑван батарея, хамӑрӑн юратнӑ артиллеристсем, «артистсем»... Фрицсем ҫавсене пӗтересшӗн! Ҫук, ҫук, кунта урӑх меслет тупас пулать, урӑх май...

— Ну, пошоль!—картах хулпуҫҫинчен тӗкрӗ ӑна нимӗҫ.

Хӑйӗн йывӑр шухӑшӗсен вӗҫне тупма тӑрӑшнӑ Бойков сасартӑк ыйхӑран вӑраннӑ пекех сиксе илчӗ.

— Юрӗ, халех илсе каятӑп. Алсене салтӑр,—терӗ типпӗн. Унӑн сасси тӑрӑхах, вӑл темле пит те хӑюллӑ шухӑш тытни сисӗнчӗ. — «Кӑтартӑп сире батарея!»—тенӗнех туйӑнчӗ.

Пурте вырӑнтан хускалчӗҫ. Малта — Бойков, ун хыҫҫӑн—ӑна ҫурӑмӗнчен автоматпа тӗлленӗ хыткан нимӗҫ, кайра—ытти салтакӗсем.

Пӗр икҫӗр метр пек вӑрман хӗррипе пырсан, Бойков сасартӑк сулахаялла, вӗтлӗх патнелле пӑрӑнчӗ. Вӑл пуҫне ҫӳлелле ҫӗклесе, пӗтӗм кӑкӑрӗпе сывласа, хӑвӑрт утрӗ. Чӗри ним чарусӑр сиксе тухас пек тапрӗ унӑн, тӑнлавӗсене юн тулса ларчӗ...

Тарӑн юр тӑрӑх ишсе пынипе, нимӗҫсем часах йӗп-йӗпе тара ӳксе, хашкакана ерчӗҫ. Хыткани ик-виҫӗ хутчен те хуллентерех утма хушрӗ, анчах Бойков халь ним те илтмерӗ...

Вӗтлӗх патне ҫитесси ҫӗр метртан ытла юлмарӗ. Бойков каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ те, нимӗҫсем юр тӑрӑх унӑн-кунӑн сапаланнине курчӗ.

— Аван... питӗ аван..:—хӑвӑрт шухӑшларӗ вӑл, уттине тата ытларах хӑвӑртлатса.

Малта, ҫамрӑк хурӑнсем хушшинче, ҫын мӗлкисем хускалани палӑрчӗ. Бойков хӑйӗн хыҫҫӑн пыракан нимӗҫсем ҫине тата тепӗр хут пӑхса илчӗ те, мӗнпур вӑйне пухса хыттӑн кӑшкӑрса ячӗ:

— Юлташсе-ем! Перӗр! Фашистсем килеҫҫӗ! Перӗр часрах! Перӗ-ӗр!.. Часра-ах!..

Хӑй ҫавӑнтах юр ӑшне ҫӳлтен пӑрахнӑ чул пек чӑмса, аяккалла упаленме тытӑнчӗ. Унччен те пулмарӗ—виҫӗ секунда та иртмерӗ пуль!—тупӑ кӗрслетрӗ. Бойков урлӑ снаряд хыҫҫӑн снаряд чашкӑрса иртсе ҫурӑлчӗ, урса кайнӑ пек «Максим» ӗҫлеме тапратрӗ. Сывлӑш снарядсем ҫурӑлса сирпӗннипе, пульӑсем шӑхӑрнипе, нимӗҫсем ылханса кӑшкӑрнипе, ахлатса йынӑшнипе суранланнӑ йытӑсем пек ҫухӑрнипе тулса ларчӗ.

Бойков ҫаплах малалла упаленчӗ.::

...Тепӗр сехетрен, тул ҫутӑлнӑ чух, батарея командирӗ Бойковсен батальонӗн командирне телефон патне чӗнчӗ.

— Санӑн кунта килнӗ боец кӗҫӗр мӗн туса хунине пӗлетӗн-и эс?—терӗ вӑл ҫемҫен кулса.—Пӗлместӗн вӗт? Начар..: Ун пеккисем ҫинчен хӑвӑрт пӗлес пулать..:

— Мӗн тунӑ?—тӗлӗнчӗ комбат,—Маттур каччӑ пек туйӑнчӗ-ҫке вӑл мана... Лайӑхах пӗлсе ҫитместӗп те..:

— Эп те хурламастӑп.

— Апла пулсан—мӗн тата?

— Акӑ мӗн. Вӑл пирӗн батарейӑна нимӗҫ автоматчикӗсем тапӑнассинчен хӑтарчӗ. Ку пӗрре. Иккӗмӗшӗнчен, ӑна пула, халь ман батарея умӗнче вунсакӑр нимӗҫ вилли выртать..:

— Хӑй мӗнле?

— Ҫӑмӑллӑн кӑна суранланнӑ та—аптрамасть, чиперех..: Кунтах ларать: Трубкӑна парас-и?

— Пар-ха, пар!

Лейтенант телефон трубкине Бойкова тыттарчӗ.

— Итлетӗп, юлташ капитан!—терӗ вӑл пӑлханнипе кӑштах чӗтрекен сасӑпа.—Каҫарӑр, эпӗ линие епле тӳрлетни ҫинчен эсир хушнӑ срокрах пӗлтерей-мерӗм, пӗртакках фрицсем кансӗрлерӗҫ..:

— Юрӗ-ҫке, юрӗ,—илтӗнчӗ комбатӑн кӑмӑллӑ сасси.—Часрах кил-ха эс кунта, ыталам сана пӗрре!

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

*)Стой! Руки вверх!—тени пулать.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, промышленность пайӗн 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 015 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф_6. 58 84 п.